# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

97 (7522) № * Шăмат кун, 2007 çулхи ноябрĕн (чӳк) 17-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕнче

## Хевти пур-ха Муркашсен



Çĕр ĕçченĕ кăçал та тăрăшса ĕçлерĕ. Халĕ кăштах сывлăш çавăрса илме те юрать. Апла пулсан çу каçипе ĕçленине, тыр-пул хисепне пĕтĕмлетме те вăхăт. Çакна шута илсе чӳк уйăхĕн 9-мĕшĕнче республикăри ял хуçалăх ĕçченĕсем, продукци тирпейлекен промышленноçра тăрăшакансем Чăваш оперăпа балет театрне пухăнчĕç. Професси уявне вĕсемпе пĕрле паллă тума ЧР Президенчĕ Н. Федоров та хутшăнчĕ.

Кăçалхи уяв хăйне евĕрлĕхпе те палăрса юлчĕ. Уяв умĕн ЧР Президенчĕ республикăри мал туртăмлă тата нумай çул ĕçлекен 14 хуçалăх ертӳçипе ял хуçалăхне упраса хăварса малалла аталантарас, ял хуçалăх ĕçне çамрăксене явăçтарас, вĕсене ĕçлеме яла çĕнĕ техника илсе килес, агротехникăна лайăхлатса çĕнĕ технологисене вăй парас тĕллевпе çавра сĕтел ирттернĕ. Палăртма кăмăллă, унта пирĕн районтан “Ударник” тата “Свобода” хуçалăхсен ертӳçисем П.Давыдовпа К.Сретинский хутшăннă. Çавра сĕтел ыйту – хурав мелĕпе иртнĕ. Председательсем хăйсен шухăшне пĕлтернĕ чух ял хуçалăхне çĕнĕ техникăна кредитпа парсан уншăн 10 çулта тӳлесе татма тата тӳлеве 5 çултан пуçлама сĕннĕ. Президент вара РФ Правительстви çывăхри 5 çул хушшинче Раççей бюджетĕнчен ял хуçалăхне 100-шер миллиард тенкĕ укçа уйăрма пăхни çинчен, ЧР бюджетĕнчен яла килекен специалистсене каялла тавăрмалла мар субсидисен виçине çитес çултан ӳстерме пăхни пирки каланă.

Уявăн савăнăçлă пайĕнче те Муркашсен ыттисемшĕн кăна алă çупса лармалла мар пулчĕ: çĕнĕ йышши технологисене производствăна кĕртнĕшĕн “Моргаушская” чăх-чĕп фабрики, ял хуçалăх техникине упрассине çӳллĕ шайра йĕркеленĕшĕн “Герой” ял хуçалăх производство кооперативĕ, ЧР Президенчĕн 2006 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче кун çути курнă “Пысăк ял хуçалăх организацийĕсен ĕçнехĕлне стимулламалли хушма мерăсем çинчен” 61 № Указне пурнăçлассипе активлă ĕçленĕшĕн ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен “Свобода” ял хуçалăх производство кооперативĕ-завочĕ пĕрремĕш вырăнсем йышăнса дипломсемпе укçан премисене тивĕçрĕç.

Уяв иртрĕ. Кăçал та Муркашсем хăйсен ĕçлеслĕхĕ çӳллĕ шайра пулнине кăтартрĕç. Çак тăрăшулăх малашне те ан сӳнтĕрччĕ!

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: К. Сретинский Президентран диплом илчĕ; район делегацийĕ уявра.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Ял пурнăçне – çĕнĕ шая

### Николай Федоров Президент:

## УКАЗ ЯЛТИ КУЛЬТУРĂНА ÇИРĔП ТĔРЕВ ПАРĔ

***Ĕнер Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров “Чăваш Республикинче ялти культура учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен” указа алă пуснă. Çак документа ялсенчи культура учрежденийĕсен специалисчĕсем те, культура çурчĕсемшĕн чăнласах пăшăрханакан ял çыннисем те кĕтнĕ. Указ граждансене мĕн парать? Çакăн çинчен Н.В. Федоровран хăйĕнчен ыйтрăмăр.***

**– Николай Васильевич, ялсенчи клуб учрежденийĕсене çĕнетесси çинчен калакан указа алă пусни мĕнпе сăлтавланчĕ?**

– Çак документ – ялсен территорийĕсене малалла калкал тата анлăн аталантарас ĕçри логикăпа килĕшсе тăракан утăм. Иртнĕ вунă çуллăхра эпир питĕ нумай турăмăр: республикăри мĕн пур яла газ çитертĕмĕр, никĕс шкулсем, пĕтĕмĕшле практика врач офисĕсем, тĕслĕх библиотекăсем турăмăр, çулсем тăватпăр. Хулапа ял хушшинчи уйрăмлăха чăнласах пĕтеретпĕр. Совет влаçĕ вăхăтĕнче кун пирки 70 çул калаçнă, анчах çак енĕпе курăмлă ĕçсем туман. Сăмах май, ку ĕçе хирĕç тăракан тата чăрмантаракан скептиксем, циниксем калаçнине пăхмасăр тунă, тăватпăр.

Çак уйрăмлăха пĕтерессипе çыхăннă чылай ыйтăва Раççей наци проекчĕсем пулăшнипе татса парать. Анчах шăпах эпир çак ĕçе çĕршывра пуринчен малтан пуçăннине кура Раççей Президенчĕ В.В. Путин Чăваш Республики пирки пысăк пĕлтерĕшлĕ наци проекчĕсене пурнăçлас ĕçре лидер терĕ. Вĕрентӳ шайĕ те, çын сывлăхĕ те унăн ăс-хакăлĕн шайĕнчен тата шалти культуринчен нумай килнине ăнланса эпир культура политикин сферинче те сывлăх сыхлавĕнчи тата вĕрентӳри пек çине тăрса ĕçлетпĕр. Акă паян ялсенчи клубсене çĕнетесси çинчен логикăпа килĕшсе тăракан çакăн пек йышăну тунă.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Вулакан суйлав ыйтăвĕпе

## Малашлăха е каялла?

Аталану çулне суйласа илнĕ Раççей черетлĕ суйлав умĕнче тăрать: çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртсе малалла каймалла е сăмахпа ылтăн сăртсем шантаракансем хыççăн каялла?

Раççей патшалăхĕн историне пăхсан, çĕршыв пĕрле пуласси чи йывăр вăхăтсенче палăрнă: тутар-монгол пусмăрĕ, Наполеон тапăнăвĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи. Общество пĕр чăмăра пĕрлешни тата ватти-вĕтти пĕр тĕллевлĕ пулни кăна пысăк йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшнă.

Кĕçех – суйлав. Унта хутшăнма кăмăл тунă 40 партирен паян суйлав бюллетенĕ çинче 11-шĕ кăна. Нумаях пулмасть-ха Мускавра танксемччĕ, Правительство çуртне танксем перетчĕç, çĕршывра граждан вăрçин хăрушлăхĕ хуçаланатчĕ, Раççее вăрласа пĕтерес хăрушлăх та пурччĕ. Паян вара урăхларах лару-тăру.

Декабрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн кашнийĕнех пĕрлĕхпе аркану умĕнче суйлав тумалла: е эпир каялла утăмлатпăр, е Раççей ялавĕ айĕнче пĕрлешсе ыранхи куна пăхса аталану çулĕпе малалла утăмлатпăр. Çитес суйлав çак хурава та ыйтать: е эпир хамăра хисеплеме пăрахтарса тĕнче умĕнче чĕркуçленетпĕр, е хамăр ĕçпе тата хăватлă интеллектпа Аслă Раççее хисеплеме вĕрентетпĕр. Вырăс-и эсĕ е чăваш, е урăх наци çынни – манма юрамасть: пирĕн хыçра ачамăрсен малашлăхĕллĕ Раççей.

ЧР Президенчĕ Н. Федоров Республика кунне çитес çул Муркашра ирттерме йышăну турĕ. Ку вăл хамăр район сăн-сăпатне ырă енне тĕпрен улăштармалли самант. Эпир пĕрле кăна хамăр ума лартнă тĕллевсене пурнăçлайратпăр, пĕрле çеç сутă та хăватлă малашлăха никĕслейретпĕр.

Пĕрле пулар та пĕрлĕхшĕн сасăлар! Турă пулăштăр пурсăра та!!!

**Вера ПЕТРОВА.**

Муркаш сали.

РФ Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕччен 15 кун юлчĕ!

## “Раççейĕн малаллах аталанмалла”



“Юрать, çĕршыва ертӳçĕ енчен ăнчĕ. Унăн тилхепине Владимир Владимирович çирĕп тытрĕ: Раççее ванчăкран пуçтарчĕ, унăн пурлăх никĕсне çирĕплетрĕ. Халĕ çĕршывăн виçĕ çуллăха çирĕплетнĕ бюджечĕ пур. Укçа-тенкĕпе çурт-йĕр, çулсем тумашкăн, пенси ӳстермешкĕн, халăх хуçалăхĕнчи техникăна çĕнетмешкĕн, çĕршывăн хăватне çирĕплетмешкĕн хывса хăварнă. Мĕн теес? Каялла, 1995-1997 çулсене, таврăнма чĕнес-и? Раççейĕн малаллах аталанмалла”, – терĕ МЧС министрĕ С.К. Шойгу ноябрĕн 14-мĕшĕнче Шупашкара килсен.

Раççейре

## Çурçĕрте ĕçленишĕн тивекен пенсисем пирки

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче Патшалăх Думи иккĕмĕш вулавра “Çурçĕрти пенсисем çинчен” саккун проектне йышăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн Инçет Çурçĕрте ĕçленĕ граждансен пенсийĕсем ӳсмелле.

**“Единая Россия” партин Тĕп канаш Президиумĕн Секретарĕн çумĕ, Патшалăх Duminчи социаллă политика комитечĕн председателĕ Андрей Исаев:**

– Ку вăл пирĕн пĕрлехи политикăн пĕр пайĕ. Пирĕн çĕршывра пенсисем тивĕçлĕ шайра тата вăтам ĕç укçинчен 40 процентран кая мар, пенсионерсен пурăнмалли чи пĕчĕк виçерен пысăкрах пулмалла. Çак задачăна пирĕн ума Президент лартрĕ. Пирĕн ăна çывăхри 3 çул хушшинче татса памалла. Эпир ăна пурнăçа кĕртме патшалăхăн ресурссем çитеççĕ тесе шутлатпăр.

**“Единая Россия” партин Тĕп канаш Президиумĕн Секретарĕн çумĕ, Патшалăх Думин Председателĕн пĕрремĕш заместителĕ Олег Морозов:**

– Çак саккуна пурнăçа кĕртсе эпир чылай хушă çут çанталăкăн йывăр климат условийĕсенче ĕçлесе пурăннă çынсем тĕлĕшпе тĕрĕслĕхе çиеле кăларатпăр. Хушу 1,1 миллион çынна пырса тивет. Çакна та палăртмалла, пенси ӳсесси хăйсен ĕç тапхăрне Çурçĕрте ĕçлесе ирттернĕ хыççăн çĕршывăн ытти регионĕсенче пурăнакансене те пырса тивет.

“Единая Россия” Правительство умне ку ыйтупа пĕрре мар тухрĕ те халĕ вăл пурнăçа кĕчĕ.

**“Единая Россия” партин Тĕп канаш Президиумĕн Секретарĕн çумĕ, Патшалăх Думин Председателĕн заместителĕ Владимир Пехтин:**

– Çурçĕр пенсийĕсем çинчен йышăннă Саккун парламентарисен юлашки тапхăрти тĕп çитĕнĕвĕ. РФ Президенчĕн çырăвĕ çинче никĕсленнĕ çак саккун проекчĕн историйĕ 4 çул. Вăл Çурçĕрте ĕçлесе нумай çул ирттернĕ çынсен пенсине ӳстерме каять.

Саккунпа Инçет Çурçĕрте 15 çултан кая мар ĕçлесе ватлăха кура е инвалиднăçе пула пенсие тухнă çынсен база пенсийĕсене 2340 тенкĕ таран, 20 çул вĕсемпе танлаштарнă вырăнсенче ĕçленисенне – 2028 тенкĕ таран. Пысăк ӳсĕм инвалида тухнисене е 80 çула çитнисене пырса тивĕ.

Çак саккун пирки çурçĕрти регионсенчи губернаторсем пĕрре мар калаçнă. Пĕрлехи тăрăшулăхпа тинех тĕрĕслĕх çиеле тухрĕ.

Декабрĕн 2-мĕшĕ – РФ Патшалăх Думин суйлавĕ

## “Пĕрлĕхлĕ Раççейшăн”

Пĕтĕм Раççейри общество шухăшне тĕпчекен центр “Çывăх вырсарни кун суйлав пулас пулсан, Эсир камшăн сасăланă пулăттăр?” текен ыйтупа ноябрĕн 10-11-мĕшĕсенче 1600 респондент патне тухсан çакнашкал ӳкерчĕк палăрнă: 57 процент “Пĕрлĕхлĕ Раççейшăн” («Единая Россия»), 7,7 процент – КПРФшăн, 7 процент – ЛДПРшăн. Çавăн пекех 4,8 процент – “Справедливая Россия”, 2,6 процент – “Гражданская сила”.

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă пирĕн чи çывăх çыннăмăра, аннене – Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Клавдия Николаевна ЕГОРОВАНА** ноябрĕн 17-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан мĕн пур ăшă та çепĕç туйăмсемпе саламлатпăр. Юратнă мăшăрăм, аннеçĕм, кукам, мамак! Тавах сана ытарайми ырă кăмăлушăн, чун ăшшине ним хĕрхенми пире парнеленĕшĕн. Пирĕн чуна йывăр чухне пирĕн чун ыратăвне хăвăн чĕрӳ витĕр кăларнăшăн. Кулянтарнă самантсем пулнă пулсан, каçарсам пире.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр. Кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр. Турă сана инкек-синкекрен сыхлатăр. Эпир сана юрататпăр, сана тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Тепĕр хут паллă кун ячĕпе сана, пирĕн чи-чи ытарайми çыннăмăр, анне.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, 3 хĕрĕ, 3 ывăлĕ, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, 16 мăнукĕ, 4 прамăнукĕ, хăтисем, тăхлачисем, тăванĕсем.**